28-73
№593

К. И. ПАЙРАШ

# ТЕЛЕЙСĔР КУНСЕМ

Тăвата пайлă трамă. Ĕç патша вăр çипе революутси пуçланнă вăхăтра ђăваш йалĕнђе пулса иртет

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР—1928 ç.

К. И. ПАЙРАШ

# ТЕЛЕЙСĔР КӲНСЕМ

Тăвата пайлă трамă. Ĕç патша вăрçипе револђутси пуçланнă вăхăтра ђăваш йа-
лĕнђе пулса иртет.

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР—1928 ç.

Отпечатано
в типографии школы Ф. З. У.
Чебоксары. Чувашлит № 2284.
Заказ № 252. Тираж 2000 экз

## ВЫЉАКАНСЕМ:

1. **Уçăп**—60 çултан иртнĕ старик.
2. **Верук**—унан арăмĕ, 60 çулалла çывхарнăскер.
3. **Ваӊкка**—вĕсен ывăлĕ.
4. **Ваçça**—тупкăђă, йал тăрăх хăналанса çўреме йуратаканскер.
5. **Çемен**—йалти пуйан ывăлĕ, ĕçсе, ўсĕрлсе çўреме, тата арăмĕсене улăштарма йуратаканскер.
6. **Анук**—çамрăк илемлĕ хĕр.
7. **Вçелис**—10 çулха хĕрађа.
8. **Салтак ађисем**.
9. **Çемен**—йулташĕсем виççĕн.
10. **Политси**.
11. **Пођталйон**.
12. **Лăриван**—кўршĕ çынни.

# I-мĕш пайĕ.

*Теккоратси: хрестьен пÿртьĕ. Уçăп урай варринтье çăпата туса ларать; Верук măйăх саплса ларать. Ђаршав уçăлнă тьухне Уçăп çăпатине шĕшлĕпе шаккаса ларать; Верук йĕнне тире-тире туртать.*

## I-мĕш курăнни.

УÇĂП (*вăрăмăн сывласа илсе*). Ей-йай-йай!.. Ку патша тата тем кăтартĕ ĕнтĕ. Вилесси те инçех марта.... тем курса вилмелле пулĕ тата.

ВЕРУК. Ытла çылăхланса кайрăмăр пуђ çав. Ĕмĕрте курманнине куратпăр та....

УÇĂП. Çавна калатăп çав. Ваңккана илсе каймасан татахђĕ тес хăй, вилсен те лайăх тирпейлекен пулмасй вĕй ĕнтĕ. Ах-хах-хай!...

ВЕРУК. Çынсем вăн салтака канђђен киңсем туйанса пăрса хăвараççĕ. Акă, Иштерекри Шуççим Иванĕ кайас кунне авланса хăварђĕ те. хађ те ђип ђипер пурнаççĕ. Пирĕн те çапла тума çукши, старик?

УÇĂП. Йурађђĕ те... ват шăмшаксене хуçпђен самайахђĕ те вăл, хăй шарламарĕ те, аптрамалла ĕнтĕ.

ВЕРУК. Хамăн ак хађ çĕрулми купаламалла, выђăх ђĕрлĕх пăхмалла, купăста шăвармалла, сухана хуртсем йерсе илнĕ—ăна тасатмалла—аптăрас пулай акă Ваңкка кайсан. Йурай, хађ хăй пулăшса парађђĕ те.

УÇĂП. Авлантарма çулĕ çитсе таха!... Аптрамалла ĕнтĕ... нимĕн те шарламасть. Килтех пулнă пулсан.. кĕркунне те пулсан авлантараттămăрахчĕ, тем çăви те килсе тухать те пирĕн ума...

## II-мĕш курăнни.

*Кўршĕ çынни Ваççа кĕрет.*

ВАÇÇА. Ха!.. Ватăтлма та пĕлместĕрĕçке есĕр? Иккĕшĕ те ĕçе хуçаççĕ. Тур вăй патăр еппин.

УÇĂП. Киҫах. Ваççа кума. Малалла иртсе лар. (*Верука*) Карҫак, ăçта... пукан тупса пар. (*Верук пукан тупса парать, Ваççа ларать*).

ВАÇÇА. Вырсарни кунсем ĕç тытнине курмаҫҫĕçке сире, Уçăп пиҫҫе! Пайан мĕнле ўркенмен тата? Манран пулмасть, вырсарни кунсем манăн кўрше тухса çўресех иртсе кайаççĕ. Есĕр ўрĕкех çав, вата пулсан та, шăрпăк вырăнсăр вырттнине курас çук ĕнтĕ сирĕнне. Ҫăнах!..

ВЕРУК. Ваталнă тесе ĕççĕр лармалли çук ĕнтĕ вăл пирĕн. Ара, ывăлăма салтака паратпăр мари? Ыран тухса каймалла, çавăнпа тĕртленетпĕр вĕть!

ВАÇÇА. (*тĕлĕнсе*): Но-о!.. Илҫĕçехи вара?

УÇĂП. Илҫĕç пулмасăр. Хаҫхи саманапа мĕн калаçмалли пур, Ваҫккана мар, уксах—куççăрсене те тиркемеççĕ те... Йалта пĕр йаш йулмиҫҫен хăтланаççĕ: вăрçаççĕ, вăрçаççĕ... тем тухать ку патшана çаплах вăрçса. Пĕр ывăлăмасăр тăрса йулатпăр вĕт! Ах-хах-хай!

ВАÇÇА (*Ҫĕллĕмне тьĕртсе йĕрать, тьĕлĕме çăварĕнтьен тухса ўкет*). Ай, каналĕ, пит харсăрланса кайрĕ çак ҫĕлĕм, çăварта пĕртте тăраспăн мар...

Ан-та-а... Плоххă, плоххă. Микулай патшана ларни çамрăксемшĕн ытла та лайăх мар пулҫĕ.

УÇĂП. Ҫистийех аптрамалла. Пĕтĕм пуç çаврăнса кайрĕ.

ВАÇÇА. Плоххă, плоххă. Санăн та çав; Уçăп ниҫҫе, ывăлсенҫен ыр курмалла пулмарĕ: пĕри вилҫĕ, тепри майрасене йуратса хулана кайса таçта çухалҫĕ, а ку тата... самăй хăвна пăхаканни татах апла. Плоххă, плоххă!..

ВЕРУК. Вăл аҫа-пăҫана ӳстериҫҫен ӳстерменни. Пĕҫĕккĕ ҫухне те-ек аҫашласа ӳстеретпĕр, хамăр çăвартине пама тăрăшатпăр, пасара хайсан мĕн те пулин выҫамалли илсе килетпĕр. Ӳстерсен вара... сана пăхма пĕри те çук. Саманаи ку? Те турах çапла çырай̆...

ВАÇÇА. Плоххă, плоххă.. хăй, тур çавăрсан татах тес хăй̆. Саманни хăруш çав хаҫ. Акă, Кирук салтакрах вилҫĕ, Михалăн ним сас ҫĕвĕ те илтĕнмест. Пайан тата Ваçлейе çав Йармани салтакĕсем касса пăрахнă тесе хут килнĕ, терĕ. Килтен пурте лайăх тухса кайаççĕ, кайалла... хăшĕ унтах пулай̆... тепле-е.. сайра хутра килкелеççĕ те, вĕсем те пулин йе уксах, йе куççăр.

УÇĂП. Тем курмалли пур ĕнтĕ тата ку вăхăтра Саманни çиҫ--тăвăл пек пăтранай̆. Скорă акă выçă ларма тивет: мĕн пур тыррине шăлса кайнине çитмест, ывăлсене. выҫăхсене—пăпах таçта пуçтарса кайса ҫикеççĕ.

ВЕРУК. (*Вăрăмăн сывласа илет*). Вилиҫҫен тата тем курмалла ĕнтĕ...

ВАÇÇА. Плоххă, плоххă!.. Хăвăра та плоххă килет. Акă халăх уй̆ ĕçне тухса кайай̆. Йурай̆, ман киҫ пурта.. Хĕлле пулсан, кушак пек кăмака çине хăпарса кăйап,

çулла вара... хай мунҫа çук та, хĕвел ăшшине тухса выртатăп та, сысна пек хĕртĕнеп вара. Пĕтĕм çан-çурăм кĕçтеме ҫарăнать.

ВЕРУК. Кинҫ пурри лайах та вăл. Пирĕн вăл та çук вĕть, пурне те хамăрăнах тăвас пулать.

ВАÇÇА. Плоххă, плоххă!.. Амма кайинҫҫен авлантарса хăварас темерĕрха, Уçăп пиҫҫе?

УÇĂП. Кам пĕлие-ха капла пулассине. Килте пулнă пулсан, кĕркунне кĕр мăнтарĕпе авлантарас тенĕҫҫĕ ĕнтĕ. Тăрух илсе кайаççĕ вĕть, авлантарма мар, лайăхăн пуçтарса та парса йараймастпăр вон!

ВЕРУК. Авлантарса хăварнă пулсан лайăхҫĕ те... халĕ иккĕне ытла та йăвăр килет çав. Ах, ах-ай!...

ВАÇÇА. Плоххă, плоххă!... Кинсĕр сире плоххă пулать. Мĕн пулсан та, Уçăп пиҫҫе, килтен тухса кайинҫҫен авлантарса хăвăрасах пулать. Çав ман çумри Анука илсе парсан йурамĕ-ши?

ВЕРУК. Хĕрĕ лайăх пек те вăл, пур ĕçе те çыпăçуллă тăват теççĕ те, хай темлеçке. Калаçса пăхма та пулаймарĕ çав. Аса та илмен те кун пек трук илсе кайассине.

УÇĂП. Хĕрĕ лайăх та... ĕçне тума йăвăр çав хаҫ. Аçта, ыран тухса каймалла, пайанах вăл ĕçе мĕнле тума ĕлкĕрĕн. Хатĕрленни те ним те çук та...

ВАÇÇА. Е-е-й!... Хĕрĕ çинҫен мĕн калаçмалли пур. Хамăр çумрине епĕ лайăх пĕлетĕп, ун пек хĕр йалта çукрах та пулĕ: мăнтăр, ҫипер... тата пĕркунне хунлу пĕçернĕ те, çитерсе пăхтарҫĕ: ҫисти хаҫ майрасем шурă тулран тунă кукăҫтен пĕртте кайа йулас çук ĕнтĕ. Ĕç

патĕнҫе... кахаланса тăнине курăймăн, хыҫҫăн хăваласа ҫитĕп тесе ан та ҫăвар уҫ. Ĕҫсе-ҫиме пăртак ҫухăнтарах ĕнтĕ...

УҪĂП. Пуйанни ҫинҫен асăнмалли ҫук-ха вăл пирĕн. Ҫак пӳрте пуйан ҫын хĕрĕ кам килсе кĕтĕр. Хай, партак тăхăнмаллăх ҫыпуҫĕ пулсан, хамăра пăхмалăх пулсан... ҫитрĕ вара пире, вăл та ҫук-ха хаҫ пирĕн.

ВАҪҪА. Плоххă, плоххă! Киҫ туйанса йуласах пулаĭ. Хаҫ вăл, Ваҫкка, тухса кайсан тахҫан килет, тен 3—4 ҫул пурăнĕ те, вара мĕн... ҫурт сутса ĕҫлеттерес тетри мĕн? Анука илсе парасах пулаĭ.

ВЕРУК. Ҫапла та...

ВАҪҪА. Ҫапла ҫав. Капла йулса есĕр икĕ вата пĕтĕм хуҫайствăна йухăнтарма пултаратăр.

УҪĂП. Хай ҫавăр уҫмасăҫкеха, пĕрре авланап, тесе ҫăвар уҫсанах урăхла шутласҫĕ хаĭ.

ВАҪҪА. Е-е-й!. Хăй ҫинҫен... епĕр унпа тахҫанах килĕшнĕ, Анук пирки епĕр Ваҫккапа тахҫанах калаҫса татăлнă.

ВЕРУК. Килĕштереҫҫĕ пулсан, илсе парасҫĕ те... тем йут йалтан пĕлмен хĕре илиҫҫен хамăр йалти лайăхрах пулакан.

ВАҪҪА. Килĕштермесен, Ваҫкка ун патне ҫӳрес ҫук ĕнтĕ. Хаҫ, кашни каҫ куратăп вĕт епĕ ăна Анук патне кĕрсе кайнине. Халĕ те унта кайман тем?

УҪĂП. Хĕрĕ тата те килет тем, ыран тухса каймалла аҫана мĕнле килсе кĕтĕр.

ВАҪҪА. Но... ытла та пăтранаттăр, Уҫăп пиҫҫе! Пăтранҫăк шыв та сирĕнтен тарăрах. Хĕре ҫавăрма мĕн

ӑна, хӗрарӑма çавӑрасси йавӑр ӗçи мӗк? Сахал мар ӗнтӗ, Уçӑп пиҫҫе, еп хӗрарӑм курнӑ. Ех... йаш ҫухне... пӗтӗм йал хӗрӗ ман алараҫҫӗ...

ВЕРУК. Санӑн шуӗ тавассипеха, çынсем хаҫ ӑнран кайнӑ.

ВАÇÇА. Ара, ҫӗлхине сутӑнах илмен ӗнтӗ, атте—анне каларма туса панӑ та... мӗн тавӑпӑр. (*Уçӑп çинелле* Уçӑп пиҫҫе, ытлашши ан та шутлаха есӗ. Ваçça кума вӑл пурне те майлаштараӗ. Сирӗн Ваҫккана çеç йалӑнмалла, а ытти... Ваçça куман пулаӗ.

(*Урамра салтак йурри илтӗнет, малтан хуллен, кайран хытӑран хытӑрах*)

Уй варринҫи лутра йуман,
Атте тесе, ай, кайрӑм та
Киҫах ывлӑм, ай, темерӗ
Ҫун хурланҫӗ, макӑртӑм та...

ВЕРУК. (*Майӑхне çӗлеме пӑрахса ҫӳреҫе умне пырса пӑхат*): Ваҫуксем килеççӗ!. (*хурланса*) Ах, мӗнтарӑн аҫисем!..

УÇӐП. Пӑртак пуçтарӑнкалас. Вӗсем ҫылайӑн пуҫха, пӳрт аслӑ кирлӗ пулаӗ вӗсене (*çӑпатине пӑрахса сӗтел патне пырса ларат*).

ВАÇÇА. Çӳресех килет çав. Салтака кайнӑ ҫух йурласа çӳремесӗрех пулмасӗ ӗнтӗ вӑл. Хамӑр та ӗлӗк Йаппун вӑрçине кайнӑ ҫух çӗр çывӑрмасӑр ҫупаттӑмӑр кашни хӗр патне çитеттӗмӗр.

УÇӐП. Карҫӑк, ӗçмеллисене хатӗрлесе хур. Йурласа пыр типнипе ӗçес килекен пулнӑ пуҫ вӗсен.

## III-мĕш курăнни.

(*Пÿрте Ваҥккана йулташĕсем йурласа кĕреççĕ. Пурте ÿсĕртерех, пĕри купăспа*).

УÇĂП. (*Тăрсa*). Килĕрах, килĕр, аҕасем. Кунталарах иртсе ларăр! (*Пĕрисем: сывă-и?, теприсем: лайăх пурнатăри? тесе нурне те алă парса тухаççĕ*).

1-МĔШ САЛТАК АҔИ Йатласанта ĕнтĕ, Уçăп пиҕҕе, килесех терĕмĕр, йулташ патне кĕресех шутларăмăр. Салтакне те пĕрле каймалла та, çÿрессине те пĕрлех çÿретпĕр ĕнтĕ.

УÇĂП. Йатламаллине калатăр-ха, йатламалли çук-ха вăл, сире хăй кĕнĕшĕн тав тăвасси çех.

ВЕРУК. Ларăр, ларăр!.. Амма ура çинҕех тăратăр. Пайан утса ыванна пуҕ вĕт! (*Ваҥкка çинелле*) Ваҥкка, ларăр, ларăр!

ВАÇÇА. Килнĕскерне ларăрах ĕнтĕ. Килнĕскерне хăна пулсах кайăр! (*пурте лараççĕ. Уçăп сăра ĕçтерме пуçлат*).

УÇĂП. (*ĕçтерсе*). Ма ĕçместĕр есĕр? Ман патна çаплах килес çук вĕт. Ĕçĕрха, ĕçĕр!

ПĔР САЛТАК АҔИ Ĕçсе çитнĕ ĕнтĕ пирĕн, Уçăп муҕи. Йулташпа пĕрле тесе анҕах килнĕ епĕр.

УÇĂП. Ара, апла пулсан та, пăртак ĕçĕрехха ĕнтĕ. Ну, Иван, ĕçсе парха.

САЛТАК АҔИ. Тур пулăштăрҕҕĕ епинн (*Уçăнна Верука ал тытат*).

ВЕРУК. Çаплах, çаплах. Тур пулăштăрҕҕĕ. (*Уçăп йеркипе ĕçтерсе кайса куркине Ваççана тыттарат, Ваççа пĕр çăвара туса ĕçет те, тыхланса пĕрĕхтерсе кăларса йарат*).

ВАҪҪА: Ай—труй! сăри ҫĕпреллĕрех пулнă витнă сирĕн, пыра ланках ларђĕ.

ВЕРУК: Арэ, ђăваш сăри ҫĕпреллĕрех пулаҭ ҫав, савăт сăрине ăҫтан ҫитĕ. Халĕ те ала витĕрех йухтарса кăлартăм та...

(*Ваңкка ерех ĕҫтерме тытăнаҭ*).

ВАңККА. Ĕҫĕр, йулташсем! Мĕн пур савăнăҫĕ те пирĕн ҫаканта, лере кăна курас ҫук. Ме, ĕҫ Кавĕрле, ĕҫ, вырăсла хур. Ну, ну!.. (*лешĕ*): тур пулăштарђђĕ еппин малашне те ҫак ҫакăр—тăвара ĕҫсе-ҫиме, тесе тĕппипех хураҭ.

ВЕРУКПА УҪĂП. Тур пулăштăрђĕ ҫав. Тур пулăшсан, пурте пулĕ. (*Уҫăп сăра ĕҫтерсе ҫавăрнаҭ, салтак аҭҙисемпе халаплаҭ, Верук пĕр салтак аҭҙипе йумахласа лараҭ*).

(*Ваңкка йĕркипе ĕҫтерсе пырса Ваҫҫана параҭ*).

ВАңККА. Нука, Ваҫҫа пиђђе, хур ха!

ВАҪҪА. Хам ĕҫтермен таха, ну йурĕха (*пĕр ҫăвара туса ĕҫет те, каллах тьыхланса пĕрĕхтерсе кăларса йараҭ*). Ай-ай, хăватлă. пыр шăтăкне пĕҫертсех кайрĕ.

ВАңККА: Ара, ăсату ерехне вирлĕрех тăвас тенĕ пуђ ĕнтĕ: тепре ĕҫсе парха, Ваҫҫа пиђђе! (*тултараҭ*).

ВАҪҪА. (*Каллех тьыхланаҭ*). Ну, вилес пулаҭ кăна ĕҫсе, на тыт (*тыттараҭ*).

ВАңККА. (*Салтак аҭҙисем ҫинелле*). Ну, йурлăр, ташлăр, тантăшсем. Хађ килте ђухне хăтланарха, лере кайсан урăхла ташлăпăр.

(*Пĕри купăс туртса йараҭ, ыттисем ташлама тухаҫҫĕ*).

УÇĂП. Ташлăр, ташлăр, ађамсем. Сирĕн савăнăçĕ те пайанлăха çеç. (*атђисем ташлаççĕ, Ваçça алă çупса ларат*).

ВАÇÇА. Хок-хок, хой! йарапар, йарапар! йулашкине пире пар... хок! (*ташласан, ташласан тђарăнаççĕ. Уçăп каллах сăра ĕçтерме тытăнат, Верук куçне шăлкаласа ларат*).

ВАÇÇА. Ну пултараттăр, çамрăксем! лере те çакăн пекех пултарсан, никам та çăнеймĕ сире.

Молотсы-ы...

САЛТАК АЂИСЕМ. Тав ыр сăмахна, Ваçça пиђђе! есĕ каланă пек пултăрђђĕ.

ПĔР САЛТАКĔ. Ну тата йурласа кăтартар пуђ.

ВАђККА. Тавай, тавай, пĕрче туса тепĕрче парахса хăварас мар ĕнтĕ. (*Салтак атђисем ура çине тăраççĕ, пĕрпĕринпе ыталанаççĕ, хăшĕсем тутăр кăларса вĕçтереççĕ*).

Хура курак, ай, кайнă ђух
Хуран тарри хумханаť;
Епир тухса, ай, кайна ђух
Хура халăх хурланаť.
Йулашки кун савăнатпăр
Атте килĕн çуртĕнђе,
Ыранхи кун, ай, кайатпăр
Нимĕçсемпе çапăçма!..

(*Верук йĕрет, антђах сасăпа мар. Уçăп пуçне тђиксе ларат. Ваçça та тĕлĕнсе ларат. Кăна курсан Вађкка ашшĕ-амăшĕсем патне пырса йăпатат*).

ВАђККА. Ан хурланăр, атте-аннесем! вăрçа пĕтерсен сывах таврăнăпар-ха. (*Салтаксем йурлама тђарăнса пĕрпĕринпе сăмахласа тăраççĕ, хăшĕ майăр кăтаççĕ*).

ВЕРУК. Хăвна ху тимĕр тетне мĕн есĕ, ывлăм. Вăрçа! кайатăр вĕт, вăрçă вăл ĕçе кайни мар вĕтĕ, килте тирпейлĕ вилнинђен те нађартарах вĕт вăл.

ВАÇÇА. Плоххă, плохха! ађасене ытла та хĕн килђĕ. (*тайкаланса ларат*). (*Салтак атђисем татах тайкаланса йурлаççĕ. Йурласа тђарăнсан*)...

ПĔРИ. Ну, кайар пуђ, тантăшсем! Кунта çитĕ, çитмеллисем татах нумай вĕт-ха пирĕн. Каçђен çитес, каçпа тата хĕрсем патне çитсе курмалла.

ЫТТИСЕМ. Кайас, кайас! (*кайма тапранна пекки пулаççĕ*).

УÇĂП. Ан васкăрха ĕнтĕ, ман патна çаплах килес çук есĕр.

ВАÇÇА. Çитмелли çĕре çитесех килет пуђ вĕсен те.

ВАђККА (*тăрса*). Ма ытла васкатăр, йулташсем?

ПĔРИ. Çитрĕ кун ђулпа. Çитмеллисем татах пурĕçкеха пирĕн.

УÇĂП. Ан васкăр-ха, тепрер курка ĕçтерсе йулам (*ĕçтерсе çаврăнат*).

УÇĂП (*ĕçтерсе*). Ех, çак куркана татах курма тур çавăртăрђђĕ сире, ађасем.

ПĔР САЛТАК АЂИ. Тур пулăшсан тен таврăнăпăрха Уçăп муђи.

УÇĂП. Çаплах пултăрђђĕ, ађасем, çаплах.. ĕçĕрха, ĕçĕр

ТЕПĔР САЛТАК АЂИ (*курка тытса*). Ну, Уçăп муђи! халиђђен епĕ ерех ĕçсе курманђђĕ, хуйхă суйхă... вĕрентрĕ. Ан йатла ĕнтĕ килсе ĕçнĕшĕн.

УÇĂП. Мĕн йатламалли, килмен пулсан, ђăнахах... йатласан та йурађђĕ. Хаљ есĕр мана савса килнĕ вĕт. Ĕçха, ĕç! (*ĕçтерет, пурне те курка парса çаврăнат*).

ВЕРУК. Ара, апат лартмаллаҫҫӗ, епӗ астуман та... (*хатӗрлеме хӑтланать*).

УҪӐП Хатӗрле, апатсӑр мӗнле вӑл?

САЛТАК АҪИСЕМ. Ан ҫӑрманар, Верук кинемей! пур пӗрех анас ҫук. Урӑх ним те кирлӗ мар (*кайма тӑраҫҫӗ*).

ВЕРУК. Апат лартмасар мӗнле вӑл. Анмасӑ пулсан та, кӑмӑлшӑн ларӑр еппин.

САЛТАК АҪИСЕМ. Ҫук, ҫук, ан ҫӑрманӑр, ҫиленсе ан йулӑр. Ну, айта, Ваҫкка! (*каймӑ хатӗрленеҫҫӗ*).

ВАҪККА, Ну, тантӑшсем, ҫилленсе ан кайӑр. Епӗ халӗ сирӗнпе пыраймастӑп. Манӑн ирех кайма пуҫтарӑнмаллисем нумай-ха. Ҫавӑнпа халӗ пыраймастӑп пуҫ.

САЛТАКСЕМ. Илсех кайатпӑр. Пуҫтарӑнмалли вӑл пирӗн те пур.

ВАҪККА. Ҫук, тантӑшсем, ан ҫилленӗр. Хаҫ епӗ пыраймастӑпах. Каҫхине тухатӑп, каллах пӗрле пулӑпӑр.

САЛТАКСЕМ. Йурӗ еппин. Вӑйпа илсе тухма ҫук ҫынна. Каҫпа тухан пулсан йурӗ.

ПӖР ҪАЛТАКӖ Каҫпа лашасем кӳлсе тухар. Ҫӗмӗрттерер кайиҫен урам тӑрӑх.

ВАҪККА. Ман ҫук ӗнтӗ вӑл лаши. Ну. ҫапах йулташсем ларсан тӗксе антарас ҫук мана та.

САЛТАКСЕМ. Мӗн калаҫан кирлӗ мара. Хаҫ йалта лаша тупмасан мӗн салтак аҫисем пулатпӑр епӗр.

ВАҪҪА. Лаша хам паратӑп, ҫуман пулсан та ҫупӗ ҫупех.

САЛТАКСЕМ. Акӑ тупӑнҫӗ те. Йал тени хӗсӗр пулаҭи вара. Ну, кайар. Ҫилленсе ан йулар.

УҪӐП. Каккуй ҫиленмелли, татах тур ҫавӑртӑрҫҫӗ сире ҫак ҫӑкӑр тавара ҫиме.

САЛТАКСЕМ. Сыв пулӑр-ха (*алӑ парса салтак йурри йурласа тухса кайӗççӗ, Ваҥкка ӑсатса йарат*).

**IV-мӗш курӑнни.**

ВАÇÇА (*салтаксем тухса кайсан*). Плоххӑ, плоххӑ! стариксене капла канçӗр пулаӗ йулма.

УÇӐП. Наҕар та, патне çитрӗçке. Кӑна пӗлнӗ пулсан, малтанах вӑранмаллаҕҕӗ те...

ВЕРУК (*Ваҥкка çинелле*). Ваҥкка, ытла нимсӗрех тӑрса йулатпӑрӗçке, аҕам! çав Анука илсе парса хӑварсан мӗн пулӗши?

ВАҤККА (*тьилайтьтьен пуçне усса шухӑшласа ларнӑ хыççӑн*). Никам та пырас çук мана. Ыран тухса кайакан çын патне кам килӗ? Анук мар, кӗлӗмçӗ те, çапкаланҕӑк та килес çук.

ВАÇÇА. Сана-и? Сана Анук сиксех килет-ха. Сан пек ҕипер аҕана пымасан тата...

ВАҤККА. Клессине пӗлместӗп. Ӗлӗкрех пулнӑ пулсан, пулӗҕҕӗ теи тен, халӗ салтакран таврӑнмасӑр çук ӗнтӗ. Йавӑр пулсан та, пӗр тапхӑра ҕӑтасах пулаӗ уш.

УÇӐП. Ах, карҕӑк иксӗмӗре пит йавӑр килетçке капла, Ваҥкка. Çын тупса хӑварнӑ пулсан, лайӑхҕӗ те.. (*Ваҥкка пуçне тьиксе ларат*).

ВАÇÇА. Нимӗн те ан шутла, Ваҥкка шӑллӑм. Киле ватасене пӑрахса хӑвариҕҕен Анука илсех парса хӑвар. Анук епӗ каласан каҕҕа мар, шыва та сикӗ. Туҕккӑ санӑн йулташусенҕен йулас пулаӗ ӗнтӗ пӗр-ик кун. Çиҕҕас ашшӗ-амӑшӗсем патне кайса ӗç кӑларса килетпӗр.

ВАҤККА. Ах, йулсан ырри пулас çук пек туйӑнаӗ. Хаҕ вӗӗ саманни çапла: теçерттир тесе персе те пӑрахӗç.

ВЕРУКПА УÇĂП. Пĕр-ик куншăнахи? Пĕр-ик куншăнах нимĕнех те пулас çук, Ваҥкка. Киҥ тупса парса хăварсан, пире ђун уççи пулађђĕ. Шутласа пăх-ха! (*Ваҥкка пуçне усса шутласа ларат*).

ВАÇÇА. Пĕр-ик куншăн нимĕнех те туса пăрахмĕç ĕнтĕ, Ваҥкка шăллăм. Хĕрне йуратан. çиђђас кайса ĕç тăватпăр. Пĕр ђетвĕрт лешĕ (*пырне тĕллесе кăтартат*) кăна пултăр.

ВАҤККА. Хĕрне тиркесех каймастăп та...

УÇĂП. Çуттине тупма пулĕ ăна. ĕçĕ тухсан, ăна шырама йутах каймăттăммăрђђĕ те халĕ.

ВАÇÇА. Апла пулсан, ĕç пулђĕ те сирĕн. Ыттине хам çине илетĕп. Ун-пек кун пек йапалана тин курса пăхнă-им? Вăл ĕçре ăш пиçнĕ ĕнтĕ манăн. Ну, Ваҥкка, килĕштеретне?

ВАҤККА. Енĕ тахçанах килĕштерпĕ, салтака кайас пирки çеç тытăнса тăратăп.

ВАÇÇА. Ну, Уçăп пиђђе! ĕç тухаĭ сирĕн. Ыран Анук киҥ сирĕн пӳртре пулаĭ. Ну, Ваҥкка, айта, кайар!

УÇĂП. Ђим-ха, ытла васкас мар. Унђђен пăртак ĕçер, сăмахлама ђĕлхе çемçе кирлĕ вĕĭ!

ВАÇÇА. Тĕрĕс, тĕрĕс. Хĕрни вăл пире ђăрмантармасĭ. (*Уçăп ерех ĕçтерет, Вĕрук—сăра. Ваҥкка пуçне таиксе шутласа ларат*).

УÇĂП. Еçха, ĕç, ђĕлхӳ çемçелтĕр лайăхрах.

ВАÇÇА. Епĕ откас ма-ар (*ĕçет*).

ВЕРУК. Ăçтан тур çавăрса килнĕ, Ваçça сапа. Есĕ килмен пулсан, тĕлпе те пĕлес çук.

ВАҪҪА. Ара, турри ман хампах ҫӳрет вӗт, кирлӗ ҫӗре хӑйех илсе кӗртет.

УҪӐП. Хӑйматлӑх тӑвас пуҫ сана, Ваҫҫа кума. Ҫавӑн ҫул ӑс тупнӑшӑн ахаҫ тума лайӑх мар.

ВАҪҪА. Ӑна пулӑпӑр таха, хаҫ малтан хӗрне илсе килесха, унтан ҫара тур пулӑшнипе пурте пулӗ.

ВЕРУК. Ийа, ийа... хай, майне кӳрсен ӑна тӑвасси нумай ӗҫех пулас ҫук вӑл.

ВАҪҪА. Ну, кун ҫул хӗрнипе калаҫма мар, 8 пӑт та йатап. Кайар пуҫ, Ваҫкка.

УҪӐППА ВЕРУК. Ара, кайса пӑхӑрах еппин.

ВАҪККА (*вӑрӑмӑн сывласа илсе*). Е-е-х!.. шеҫ сире атте-аннесем. Килӗшетӗп. Кайса пӑхӑпӑр, анҫах ӗҫ тухсах пӗтессе пӗлейместӗп. Темле пӗртте ҫӑмӑл мар. Кайассине кайӑпар.

ВАҪҪА. Ҫамалли ҫӗнӗ ҫын килсен пулӗ. Кайатпӑр, Ваҫкка.

УҪӐППА ВЕРУК. Кайса пӑхнӑшӑн нимӗнех те мар, анҫах ӗҫне те тусах килесҫӗ, Ваҫкка!

ВАҪККА. Мӗнле пулӗ (*тӳрленкелесе хитреленкелет*).

ВАҪҪА (*Ваҫккана*). Ну, айта. Ҫетвӗртне ил. Манран пулмасӗ, тирӗнсе кайсан таҫта ватса пӑрахас пулӗ. (*Верук ҭетвӗрт ерех хатӗрлесе парать, Ваҫкка ӑна илет*).

ВАҪҪА. Кайрӑмӑр ӗнтӗ. Е-е-й.. Уҫӑп пиҫҫе, киҫ пулаӗ.

УҪӐП. Ҫаплах, ҫаплах тӑвас терӗмӗр ӗнтӗ. (*Вӗрукпа Уҫӑп ӑсатса кӑларсн йараҫҫӗ*).

УҪӐП. Ну, ку майлашсан, татахҫӗ хаӗ!

ВЕРУК. Пӳрте пӑртак пуҫтаркалас пуҫ, ҫӗнӗ ҫын килнӗ ҫӗре мӗн пулсан та пӑртак тасарах пултӑр (*урайне шӑлма пуҫлать. Ҫав вӑхӑтра ҭартов йӗрипен хупӑнать*).

# II-мĕш пайĕ.

## I-мĕш курăнни.

*Теккоратси: Ануксен пÿртђĕ. Ашшесем кÿршĕри йала сăра ĕçме кайнă. Анук пĕтђђенех тĕрĕ туса ларат. Йурлат, хĕр йĕрри кĕввипе:*

Ђашки, ђашки сар мăйăр
Камна ларса çийемши:
Савни кайсан салтака
Кампа ђуна пусарамши? } 2-шер хут.

(*Тĕрине пăрахса тăрса*). Ах, ытла та ăш варкатçке, ларас тăрас килми те пулђĕ ĕнтĕ. Çынсем пур, савнисемпе ĕмĕр вĕçне савăнса пуранаççĕ, есĕ пур, пайан килĕшнĕ те, ыран уйăрласа кай. (*Çамкине тытса*). Ăçташи ман телей? Килтĕрђђĕ хăй ђасрах, пайан улах пулассине тахçанах пĕлмелле халиђђен. Кайиђђен тепре курса йуласђĕ хăй. (*Сĕтел умне пырса ларса çамкине тытса тытах йурлат.*

Ма килместĕн, ђун савни
Курас килет ман сана } 2-шер хут.

(*Алăкран шаккани илтĕнет*). Анук (*хăранă пек пулса*) кам унта?

ВАÇÇА САССИ. Кунта йутсем мар, хамăр çынсем. Уçха! (*Анук уçса йарат. Ваççана Ваңкка кĕреççĕ. Анук Ваңкка кĕнине курсанах вăтаннă пек пулса кайат*).

ВАҥККА. Сывӑ-и? (*пырса алӑ парать*).

АНУК. Сывӑ-ха, хӑвӑр мӗнле ҫупатӑр? килсе те курмастӑрӗҫ кайиҫҫен, мӗнле есӗр...

А, Ваҫҫа пиҫҫе, ерехне мӗн тума илсе килнӗ тата есӗ?

ВАҪҪА. Мана аҫусем кирлӗ. Ӑҫта кайнӑ-ха вӗсем?

АНУК. Вус-кассине сара ӗҫме кайнӑ. Вӗсене кӗҫӗр ан та кӗт, ырансӑр килместпӗр тесе кайрӗҫ. (*Тӳртӗн ҫавӑрӑнса тӑрса тем пӑхать*).

ВАҪҪА (*Ваҥккана йӑпӑтитӑн*). А-а! епӗ вӗсем патне кайамха, Вус-кассисем манӑн та йут ҫынсем мар. Есӗ халь йул. Епӗ унта пӑртак ӗҫкелетӗп те, вӗсемпе пӗрлех килетӗп Ӳсӗрпе ӗҫ ҫас пулать вӗт. Йуратӑн?

ВАҥККА. Йурать.

ВАҪҪА (*хыттӑнтарах*). Апла пулсан, манӑн кайас пуҫ. Сирӗнпе йаш ҫынсемпе ӗҫех ҫук манӑн.

АНУК. Татах киль, еппин.

ВАҪҪА. Епӗр килетпӗр (*тухса кайать*).

АНУК (*Ваҥккана*). Ма ҫас килмерӗн? Пайан сана кӗт, кӗт, ывӑнтӑм кӗтсе, ҫӳреҫерен те темиҫе пӑхрӑм: ҫук, курӑнмасть (*савӑнса*). Ларха, лар! (*Ваҥккапа йунашар ларасҫӗ*).

ВАҥККА. Ах, Анук! (*вӑрӑмӑн сывласа илет*) тем пек килӗттӗм. Пӗтӗм щухӑш сан ҫинҫе, анҫах ниҫта та ҫитсе ҫитерме ҫук, Ыран тухса каймалла вӗт. Акӑ, халӗ те йулташсенҫен уйӑрлсах килтӗм.

АНУК (*хуйхӑллӑн*). Ах, Ваҥкка-а! кайатӑн вӗт аҫам. Пӗр кайсан хӑҫан курас ӗнтӗ ман сана. Тем пек йуратнӑҫҫӗ епӗ сана, сана пӗр кун курмасӑр пурӑнсанах ӑш варкама пуҫлать, хама хам вара ҫисти ҫирлӗ ҫын

пекех пулса кайатăп. Ак хађ пайан, мĕн йĕмен пуђ епĕ сан çинђен шутласа. Шутлан, шутлатăн, сисмесĕрех куççуђсем йухса анаççĕ. Ма йуратмалла пулнăши çав тери есĕ?

ВАђККА. Пăртак суймастăнши, Анук? епĕ вĕт ђухăн çын ывăлĕ. Манăн пĕр хĕсĕр кађакасăр пуçне нимĕн те çук. Сана вĕт тем ђул пуйан çын ывăлĕсем хапсăнаççĕ. Акă, Çемен мĕнле пуйан çын ывăлĕ, çапах сана йуратаť.

АНУК. Нихçан та суйас çук сана епĕ, Вађкка. Йурату пуйанлăхра мар. Маншăн пулсан хăť кĕлĕмçĕ пултăр, ђуна килĕшет пулсан пур пĕрех йуратататăп. Ех, ыран тухса кайатăн вĕт, Вађкка (*Вађкка çине пуçне тайать*). Мĕнле пурнас есĕ кайсан?

ВАђККА. Анук ђунăм, итле: манра ĕç сахал. Ах... çав Çеменех кураймасť, пĕрмай сыхлаť вĕт вăл епĕ кунта килсе çӳренине, мана вĕлерес тесе хăй майлă 3—4 ађа çавăрнă.

АНУК (*хăранă пек пулса*). Ђăнахи? вăт усал. Хăť темле хлтланса çӳресен те епĕ ăна кайас çук, йураťтассăм та çук. 2—3 хут авланса уйăрлнă пĭуанђука кам йураттăр ăна. Кай, кирлĕ мар!..

ВАђККА. Апла пулсан...

АНУК. Мĕн апла пулсан? кала, ма уççине каламастăн есĕ, вăтанатни мĕн манран?

ВАђККА. Епĕ... Анук, сана кађђа илсе хăварасшăн. Аттесем питĕ илтересшĕн сана. Пĕр-ик кучлăха йулташсенђен йулас та, авланса хăварас тетĕп. Килессине те епĕр Васса пиђђене çав шутпа килтĕмĕр, ахалĕн пулсан ма ерехпе килетпĕр.

АНУК. А, ăçта карĕха хађ вăл Ваççа?

ВАңККА. Аçусем хыççăн кайрĕ. Пĕрле ĕçетпĕр те, ĕçне те туса хуратпăр терĕ.

АНУК. Ма йуратататăпши еп сана, Ваңкка. Анђах, анђах... аттесем хыççăн кайни усăсăр пулаĭ, Ваңкка. Вĕсем мана Çемене парас пек калаçаççĕ, çавăн ђул пуйан ађана мĕнле тиркĕн, теççĕ. (*Тулта ура сассисем илтĕнеççĕ. Иккĕшĕ те хăранă пек пулса кайаççĕ*).

АНУК. Çеменсем килеççĕ пуђ. Улах пулассине ĕнерех пĕлнĕђђĕ. Ваңкка, есĕ çакăнта (*кăмака хыçне кăтартат*) пытан, атту вĕсем сана хĕнесе те пăрахĕç. (*Ваңкка кăмака хыçне пытанат, Анук ăна витсе йарат те, хăй каллах тĕрĕ тума тытăнат*).

## II-мĕш курăнни.

*Ађасем кĕреççĕ. Çемен те пур.*

ÇЕМЕН (*лайăх тумпа*). Ей, хĕр тĕр туса лараĭ. Ма пĕђђенех ларатăн вара?

АНУК. Кампа ларас ман, пĕђђенех лайăх ĕçлетĕп. (*Çемен çумне пырса ларат, ыттисем ăçта кирлĕ унта ларса тухаççĕ*).

ÇЕМЕН. Пит хитре тĕрĕ тăватăнçке есĕ. Кам вађђи пулаĭха. мана вађђи-и, Ваңкка вађђи-и?

АНУК. Никам вађђи те мар, хам вађђийех тăватăп.

АЂАСЕМ. Мĕнле хайарланса кайнă вара есĕ, Анук, ун пек пулакан марђђĕçке. Пирĕн вађђи хĕр те пухман пайан.

АНУК. Сирĕн вађђи хĕр пухса ларма кĕрĕшни мĕн епĕ.

АЂАСЕМ. Ваңккана кĕтетĕн пуђха. Ваңкка тарçи. Анђах Ваңкка кĕçĕр сан патна йетва-ли килет.

АНУК. Кирек кама кĕтĕп, унпа сирĕн ĕç çук.

ÇЕМЕН. Ха-ха-ха!.. кун пек калаçма пуçлани нумай пулаŤ-и санăн (*айăккинчен тĕккелеме тытăнать*).

АНУК. Кай кунтан, шуйттан пуçĕ. Курас килмесŤ сан сăнна (*айаккарах сиксе ларать Çемен çумнех пырать, татах тĕнĕтме пуçлать*).

АНУК. Пйанђуксем. Мĕн мăшкăлама килнĕи есĕр кунта, хамăр килтех мăшкăлама парас çук-ха сана (*ура çине тăрать*).

АЂАСЕМ. Хе-хе-хе... мĕнле усаланса кайнăха вăл. Çемен, Çемен... (*Çемене йĕкĕлтеççĕ*) нађар, çавна тыткалаймастăн та, есĕ те...

ÇЕМЕН. (*Анука йарса тытса алăк кукăрнелле сĕтĕрет*). Авалтан тухнă йăла, епĕр кăларни мар. Усал хĕрсене çапла лайăхлатаханђђĕха епĕр. (*Анук çухăрать. Вĕçерĕнсе тула тухса тарать*).

АЂАСЕМ. Тарђĕ ĕнтĕ тин, тытас тесе ан та кала. КилмесŤ ĕнтĕ вăл, кўршех тарђĕ пуђ.

ÇЕМЕН (*тарăхса кайса*). Çавна тартсан çĕр çинђе çўрес мар луђшă. Вађккапа пурĕ пĕрех ыр кураймасŤ. Упрам, çухăрт купăсна. Илтекенсем ыр çын килнĕ тетђĕр. Хађ кайар, ађасем. Пирĕн вађђи малалла та кунсем пур.

(*Упрам йатли купăсне туртса йарать. Йурласа, çухăрса тухса кайаççĕ*).

### III-мĕш курăнни.

(*Стсенă тылайтњен пушă тăнă хыççăн, Анук кĕрет те, пăхкалать.*) Кайнăха мурсем. (*Васкаса утса ырса Вађккана уçса йарать*).

ВАҥКҚА (*кăмака хыçĕнтҫен тухса*). Аранах тухса кайрĕçха, мурсем! Ну, ытла та усаланса, иртĕнсе кайнăçке вĕсем, кам та пулин ҫаракан пулмĕши вĕсене?

АНУК. Ах, Ваҥкка, ес кайсан, мана пĕрмай çапла хупласçĕ вĕт вĕсем. Аçта кайса кĕрес манăн? хăйĕн сăнне те курас килмесҭ, шуйттанăнне. (*Иккĕшĕ пĕрле ларасçĕ*).

ВАҥКҚА. Анук, итле: нимĕн те мар, епĕ сана хам патна илсе хăварам, вара вĕсем сан патне текех пымĕç.

АНУК. Ах, аттесемсĕр тухса кайсан, кайран мĕн тейĕсши вĕсем мана. Йапалисене те парса йамĕç, пӳртне те такам кĕрсе тем ӑрласа тухĕ.

ВАҥКҚА. Пӳртне питĕрсе хăваратпăр, уççине пĕрене хушăкне ҫиксе хăварас, хăйсемех тупасçĕ унта.

АНУК. Ах, пит пысăк ĕçĕçке вăл, Ваҥкка. Питĕ хăратăп епĕ апла тăрук туса хума.

ВАҥКҚА. Анук, ҫунăм. Ҫăнах та, пĕҫĕк ĕç мар ĕнтĕ вăл. Анҫах ман сана çавăн пек Çеменсен мăшкăлне нисашто пăрахса хăварас килмесҭ, хам пата пырсан çеç есĕ вĕсенҫен хăтăлăн.

АНУК (*пуçне ҭиксе ларнă хыççăн*). Ах, темме ăш варкаҭ манăн. Ма пăртак пурнмастăнши хăҭ есĕ? лайăхрах тăн çавăрса илме те вăхăт çук.

ВАҥКҚА. Çапла. Ҫăн Анук. Вăхăт ман авланма мар, тухса кайма хатĕрленмеллĕх те çук. Çапах та... саншăн епĕ вăхăт тупасах терĕм. Çак ĕçе хаҭ тăваймасан... кĕтме çук вара, мĕншĕн тесен хаҭ саманни çапла: тахçан килмелле пулаҭ, унҫҫен есĕ те таçта пулăн.

АНУК. Ан хурлантарха, Ваҥкка. Пырсан та, хаҭ вĕт ман пĕҫҫен пурнмалла пулаҭ. Ех!.. мĕншĕн телейсĕр çуралнăши епĕ?

ВАӊККА. Ним тума та ҫук, ђунам. Епӗр ҫеҫ мар, хађхи патша вăрҫи темиҫе пин ҫынна телейсӗр тăратса хăварат̆. Ҫапах та, Анук, пӗр вăхăта тӳсме пулӗ тесе шутлатăп епӗ. Кайран, салтакран таврăнсан, пурнăҫ аван пуҫланӗ.

АНУК. Темле, пӗртте ђун туртмаст̆ манăн..

ВАӊККА (*тăнӑ пек пулса*). Ђун туртмаст̆ пулсан... вăйпа мар, Анук.

АНУК (*Ваӊккана тытса*). Ăҫта, кайас тетни мӗн есӗ?

ВАӊККА. Сан ђун туртмаст̆ пулсан, манăн санпа прошђатсă тăвасси ҫеҫ йулат̆.

АНУК. Ан васкаха ӗнтӗ... лерарха пăртак калаҫса, тăрукăх мӗнле тăван вăл ӗҫе?

ВАӊККА. Ҫапли ҫаплах. Анђах васкамасăр май килмест̆ манăн, мӗншӗн тесен ӗҫне пӗтерсенех (*тарăхса*) ҫав йуплă Микулай вăрҫине кайас пулат̆. Итлеха, Анук: неушлӗ есӗ ман пурнăҫа пӗлместӗн?

АНУК. Пӗлетӗп, ђунăм. Есӗ кайсан, мана Ҫеменсем мӗнле хӗстерессине те пӗлетӗп, анђах... теме ăш пăтранат̆ манăн, тем ырă пулас мар пек.

ВАӊККА. Нимӗн те ан пăтран. Мана есӗ икӗ сăмахран пӗрине кала: мана есӗ пыратни, пымастни?

АНУК. Ма апла васкаса калап, ђунăм?

ВАӊККА. Каламаттăм... анђах вăхăт ҫапла ҫитрӗ. Ну!.

АНУК. (*Ђылайтђђен тӗлӗнсе шутласа ларнӑ хыҫҫăн*). Килӗшмесен... ырри пулас ҫук. Ҫеменсем... пур нӗр, пăтратаҫҫӗ мана. Килӗшетӗп, ђунăм! (*аллине Ваӊкка ҫине хурат̆*).

ВАӊККА. Апла пулсан... епӗ лаша кӳлсе килем, а есӗ,.. ампара тухса йапалусене хатӗрле. Аҫусене кӗт-

сен. пур пӗр ӗç тухмӗ, мӗншӗн тесен вӗсем сана Çемене парасшӑн, тата манӑн салтака тухса каймалла.

АНУК. Ђӑн калатӑн, Ваҥкка. (*Ваҥкана ыталаса илет, легӗ пуçӗнтҗен атҗашлат*).

ВАҤКА. Йапалисене кӗçӗрех илсе каймалла тӑвас. Вара ыран аçусем патне килсен. килӗштерсен, килӗштермесен те хӑрамастпӑр, мӗншӗн тесен мӗн кирли çапах ман патӑрта пулаҝ.

АНУК. Кайса... лаша тупса киҗ еппин. Епӗ... ампара тухса йапаласене пуçтарам...

ВАҤККА. Çакӑнтан малалла епӗ сана, Анук ђунӑм, хамӑн тесе шутлатӑп. (*Ђуп туса илет*). Ну, халӗ есӗ те хӑвӑнне туса йантла. Ну, айта, тытӑнар! (*Ваҥкка лаша шырама, Анук ампара йапаласем пуçтарма тухса кайаççӗ*).

## IV-мӗш курӑнни.

*Стеенӑ тҗылайтҗтҗен пушӑ тӑрат. Политсипе Çемен кӗреççӗ.*

ПОЛИТСИ. Ӑçта тарнӑ-ха вӑл, килӗнҗе те çук, кунта та çук, вот сволӑҗ таркӑн.

ÇЕМЕН. Унӑн тахçанах каймалла, хӑспотин политси пӗр ерне ӗнтӗ тарса çӳрет.

ПОЛИТСИ. Ах. тытсан... селӗм пӗçереттӗмӗр пӗрре, кӑтартаттӑмӑр епӗр ӑна мӗнле тарса çӳремеллине. Кӑмака хыçне пӑх-ха, пытанса лармани, улахсенҗе ђасђасах пытанма йуратаççӗ вӗт. (*Çемен пур çӗре те шырат*).

ÇЕМЕН. Çук.

ПОЛИТСИ. Ӑçта тарнӑши? (*пӑхкалат*).

ÇЕМЕН. Мана тата, хăспотин политси, вăл хĕнесшĕн çўрет вĕт, ĕнер улахран таврăннă ђухне йанлаттарђĕ те, пайан та пулин акă (*хăлхине тытса кăтартат*) хăлха пĕçерсе çўрет.

ПОЛИТСИ. Н-та!..

ÇЕМЕН. Тыттарсах йарасђĕ ăна, хăспотин политси. Ырă пулха есĕ... есĕ вĕт хамăр çын. Такки сана пĕр катка пыл паратăп.

ПОЛИТСИ. Анђах (*йăпăштăнтарах*) ђăна вĕт пит вăрттăн тăвас пулаť, штопă никам та ан пĕлтĕр.

ÇЕМЕН. Вăрттăн çав, çекрет ĕнтĕ вăл. Пĕрле ĕçсе—çинине кам пĕлтĕр ăна?

ПОЛИТСИ. А срукĕ... хăçан каймалла пулнăха унăн?

ÇЕМЕН. Ерне... ерне иртет. Хађ те каймасť.

ПОЛИТСИ. Ниђево. Тăватпăр. Анђах никам та ан пĕлтĕр.

ÇЕМЕН. Тăвас пулаť çав.

ПОЛИТСИ. Ну, айта. Ăçта та пулсан йулташĕсем патĕнђе пуђ. Айта, шыраса тупар. Ăна тупмасăр шырама ђаранмастпăр. (*Тухса кайаççĕ*).

### V-мĕш курăнни.

АНУК. (*кĕрет, аллинђе кĕпе—тумтирсем*). Ах, кам килсе кĕнĕши?—Веç çавăрттарса пĕтернĕ. Çав Çемен шуйттанех пуђ. Ех, çăвађђĕ ăна усала. Вăт питĕрмесĕр çўре, пĕр самантра такам кĕрсе тухса кайнă. Ним те илсе кайман пулсан йураť хăť (*пăхкалать*). Илсе кайман тем те... ма килмерĕ-ха тата вăл, хăй ђасах килетĕп терĕ, сехет те иртрĕ пуђ ĕнтĕ.

(*Стсенă хыçĕнђе шавлани илтĕнет Анук пăхкалать*).

ВАҥККА САССИ. Ну, Ҫемен. Йураҭ. Ҫынсем кайман, есӗ тыттарса йаран. Йураҭ. Сыв пулсан таврӑнӑп, ун ђухне пӗлӗп мӗн тумаллине.

ПОЛИТСИ САССИ. Ай-та!.. нумай калаҫса ан тӑр, таркӑн, ак приклат лекет.

(*Анук ђӳређе умне ђупса пырат*).

АНУК. Ах, Ваҥккана... Ваҥккана... Ҫемен тыттарса йараҭ. Ваҥкка!.. Ваҥкка!.. (*йӗрсе ђупса тухса кайат*).

(*Тулта йӗнӗ, ҫухӑрнӑ сасӑсем илтӗнеҫҫӗ*).

ВАҥККА САССИ. Сыв пул, Анук. Мана Ҫемен таркӑн тесе тыттарса йађӗ, ыран каймалласкер пайанах кайас пулђӗ, политси итлемест... сыв пул! (*Анукӑн йӗнӗ сасси илтӗнет. Пӑртак тӑрсан йӗрсе пӳрте хуллен кӗрет. Сӗтел умне пырса ларса пуҫне ђиксех йӗрет*). Ах, мӗн тумаҫҫӗ ку Ҫеменсем. Ваҥкка-а!.. (*уласах йӗрет. Урамра шӑнкрав, купӑс тата салтак йурри илтӗнет*).

АНУК. Ака ӗнтӗ... Ваҥкка йулташӗсем. Ваҥкка та ҫавсемпе пулмаллађђӗ. Ех мӗнтарӑн телейсӗр, ђун савни.. ӑҫта илсе кайрӗҫши сана? Ытла та телейсӗр ку кунсем. Пулӗши хӑҫан та пулсан телейлӗ кун. Ҫук! ҫук! Ваҥкка ҫук! Телейлӗ кун та пулас ҫук (*ӗксӗхлетсех йӗрет*).

(*Ђартав йӗрипен хупӑнат*).

# III-мĕш пайĕ.

*Теккоратси: Ҫемен йулташĕн, Упрамăн, пӳртҫĕ. Ҫемен йулташĕсемпе ĕҫсе ларат. Вҫели тĕпелте ҫывăрат. Ĕҫ тепĕр виҫĕ кунтан пулса иртет.*

## I-мĕш курăнни.

ҪЕМЕН (*куркисене тыттарса*). Ну хам та пултаратăп ҫав. Политси патне йуланутпа пĕр самантра кайса килтĕм... тыттарса йатăм йатăмах. Кайасшăн мар, шуйттан măйраки. А ҫапах та, пĕр катка пыл памаллах пулҫĕ вара.

I-МĔШ ЙУЛТАШĔ. Ара есĕ пултармасан, епĕр мар ĕнтĕ вăл пултараканни.

ЫТТИСЕМ. Ну та! Ҫеменпе мĕн калаҫмалли пур. (*Ĕҫеҫҫĕ*).

ҪЕМЕН. А политсийĕ хамăр ҫын вĕт. политси тени вăл ĕлĕк те пирĕн хута кĕнĕ те, хаҫ те усал тăвас ҫук ĕнтĕ вĕсем.

I-МĔШ ЙУЛТАШĔ. Малашне политсисем пĕтмелле теҫҫĕха вот, вĕсем вырăнне ҫухансенҫен милитсисем пулаҫҫĕ тесе калаҫаҫҫĕ.

ҪЕМЕН (*тарăхса*). Но-о!.. Ĕмĕрте пулман йапалла, ҫухăн... мĕн вăл, милитси мар, старăстă та пулаймасӳ вăл.

ЙУЛТАШĔСЕМ. Тĕрĕс. Ҫемен халашпи йаланах тĕрĕс, ҫухăнран милитси ăҫтан пулĕ вара вăл, ҫементен тесен... татах хăӳ!

1-МӖШӖ. Лайӑхӑн пӗлместӗп те, салтакрисем ҫапла ҫыраҫҫӗ тенине илтнӗҫҫӗ. Тата влаҫ та улшӑнмалла тесе халаплаҫҫӗ. Те ҫӑнах ҫапла?..

ҪЕМЕН. Пуҫтакки. Пурне те хамӑр тунӑ, малашне те епӗрех тӑватпӑр.

ИКӖ ЙУЛТАШӖ. Ҫеменпе мӗн калаҫмалли пур: шывра та путас ҫук, вутра та ҫунас ҫук вӑл. Ҫаплап, Ҫемен?

ҪЕМЕН. Ҫаплах, йулташсем. Кам мана урлӑ, епӗ ӑна такӑнтаратӑпах, пайан мар пулсан, ыран, ыран мар пулсан виҫмене. Есӗр акӑ ман йулташсем. Ыйтӑр манран кивҫен тырӑ—паратӑп, ӗҫес килнӗ акӑ—тосыттӑ ӗҫтеретӗп. Тавайккӑ, тӗппипех хурӑр. Хаҫ пысӑк ӗҫ тунӑ йатпа савӑнар пӗрех хутҫен (*стакkансене ӗҫсе лартаҫҫӗ*).

1-МӖШ ЙУЛТАШӖ. Сан кӑмӑлшӑн ӗҫетпӗр вӗт, Ҫемен. Ыр ҫын стакканӗнҫен мӗнле откасатсӑ тӑвас пирӗн? Ку ҫитмесен хамӑртан тепӗр ҫетвӗрт илсе лартатпӑр, пайан такки кун каҫипе ӗҫер. Пурӗ пӗрех ҫут тӗнҫере икӗ хут пурнас ҫынсем мар епӗр.

2-МӖШПЕ 3-МӖШӖ. Тӗрӗс. Хамӑр туссем ҫухне ӗҫни те килӗшет.

ҪЕМЕН. Ара, ҫапла пулмасӑр. Ҫаплах, ҫаплах (*тултарать, лешӗсем ӗҫеҫҫӗ*).

1-МӖШ ЙУЛТАШӖ. Вот, пирӗн аттесем ӗлӗк пӗрле пулсан, йаланах йурласа параҫҫӗҫ. Пирӗн те йурасан ҫӑрмантармӗ вӗт, а?...

2-МӖШ ЙУЛТАШӖ. Е-хе-й!.. Ҫемен сан-а.., мӗнлеҫҫӗха, хы..., итре йурӑ пурҫҫӗ. Пасттой... (*йурлама хӑтланать*).

Ки-как кайӑк хур кайӑк
Кӗр кайаҫ̆ те, ҫу килет...

ҪЕМЕН. Апла мар. Ҫапла (*йурлат, ыттисем йна пулӑшлаҫҫӗ*).

Хурҫ̌ка тытаҫ̆ ҫ̌ӑх-ҫ̌ӗппи!
Какай ҫисе савӑнаҫ̆, савӑнаҫ̆;
Епӗр ҫ̌ӗпӗ тытмастпӑр, тытмастпӑр
Ҫын вӑйӗпех пурнатпӑр, пурнатпӑр.

1-МӖШӖ. Е-е-е... хурҫ̌акаҫ̌ҫ̌ӑҫке ҫавӑ. Епӗ маннӑ. (*Татах йурлаҫҫӗ*).

ҪЕМЕН. Ну, тата ӗҫерха. Кайран каллах йурлӑпӑр (*тултарат*).

ЙУЛТАШӖСЕМ. Е-ей!.. пурте пулӗха хаҫ̌. Улах ҫ̌ухне... пулӗха. (*Ӗҫсе ларт аҫҫӗ, хӑшӗ хӗрн: а-ах., тесе тутисене ҫулласа илеҫҫӗ*).

ҪЕМЕН. Пурте пур вӗҫ̆ манӑн. Ӗҫсе — ҫиме... йапала.. тем тумалӑх та йурлӑх пур. Есӗр те акӑ ҫавнашкалах пулатӑр, ҫулӑхнӑ ман ҫума... такки сире пуйтарсах йаратӑп.

ЙУЛТАШӖСЕМ. Тав ыр сӑмахна, Ҫемен. Хамӑра хамӑр сан ҫумна ҫулӑхнипе телейлӗ тесе шутлатпӑр вӗҫ̆!

## II-мӗш курӑнни.

*Кӳршӗ ҫынни Лӑриван кӗрет.*

ЛӐРИВАН. Тур пулӑштӑр, ӗҫкӗлеме? (*пурте ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ*).

ҪЕМЕН. А-а... Лӑриван пиҫ̌ҫ̌е. Киҫ̌ах, киҫ̌.

УПРАМ. Иртсе лар малалла, мӗн ура ҫинҫ̌ех тӑратӑн есӗ?

ЛĂРИВАН. Ларсах тăрас марха. Сан, Упрам, урапа пур вĕт. армана каймалла та... хамăн тĕнĕллĕ ваннă. Ҫавна мйтма килнĕҕҕĕ епĕ.

УПРАМ. Пăртак ларахха ĕнтĕ. Урапи пурҕҕĕ те, таҫта Ваҫлейсем илсе кайрĕҫ пулмалла.

ҪЕМЕН. Килнĕ хăнана... (*тултарса ерех парат*). Ĕҫсе парха.

ЛĂРИВАН (*ларса*). Тур пулăштăрҕҕĕ еппин, мĕн йатпа пулаĭха ку сирĕн, ăна—кăна пĕлмерĕм таха епĕ. (*ĕҫет*).

ЙУЛТАШĔСЕМ. Мĕн йатпа пулмалла, ахаҕ мари? ахаҕ те ĕҫме йураĭ вĕĭ!

ҪЕМЕН. Йатсăрах йаратпăр епĕр лайăх, тепре ĕҫсе парха (*тултарат, лешĕ хурат*).

ЛĂРИВАН. Ун йатне кайса пахас пуҕ еппин, пушаннă пулсан парса йарĕ тен.

УПРАМ (*ерех тултарса*). Тур калашле виҫҫĕ теҫҫĕ, тепре тытха, Лăриван пиҕҕе!

ЛĂРИВАН. Усĕрĕлсе кайсан, киле те ҫитеймĕн тата (*ĕҫет*).

УПРАМ. Халĕ ес киле мар, таҫта та ҫитĕнха.

ЛĂРИВАН. Кайса пăхас пуҕ еппин. Упрам парса йама каларĕ тесен, парса йарĕ тен. (*Кайма хатĕрленет*).

УПРАМ. Ара, кайса пăх. Епĕ ҕармастăп.

ЛĂРИВАН. Йурĕха еппин (*тухса кайат*).

## III-мĕш курăнни.

ПĔР ЙУЛТАШĔ (*путылкка тĕпне пăхса*). Е-е-й!.. пирĕн пушанаĭҫке!

ЫТТИСЕМ. Тата кайса тупса килес. Хаҗ вăхăт нумай мартăрха.

УПРАМ. Кĕркури арăмĕн пулаканҗҗĕ, çавăнта кайса пăхас пуҗ (*хатĕрленнĕ пек пулать*).

ÇЕМЕН. Апла та йулташсем... мана кун җулпа çитет пек. Есĕр пĕлместĕр. мĕншĕн еп сире ĕçтеретĕпха? Пысăк ĕç тăвасшăн.

ЙУЛТАШĔСЕМ. Мĕнле ĕç, Çемен? епĕр сана вçакки врем пулăшатпăр, кала туҗккă пире. Старăстăна кĕмелле пулсан, саншăн икĕ аллине те тăрататпăр, çынна хĕнемелле пулсан, пуç хĕрнĕ—ĕнселетпĕр.

ÇЕМЕН. Çук, ун пек ĕç мар, (*кулса*) вăл ĕçсем мĕн мана, вĕсене епĕ хам та çăмăлах тума пултаратăп. Урăххи-ха унта.

ЙУЛТАШĔСЕМ. Мĕн апла? урăххине те тумл откас мар епĕр, кала туҗккă пире.

ÇЕМЕН. Вот што: Ваҗҗкана тыттарса йанă, халĕ ĕнтĕ Анука вăрлас пулаĭ.

ЙУЛТАШĔСЕМ. Хе-хе-хе. Вот мĕ-ĕн! Мĕн йăвăрри пурха ун çумĕнҗе. Анук мĕн патша хĕрĕ-и мĕн, ăна вăрлама мĕн йăвăрри пур?

ÇЕМЕН. Май килмĕрĕха çав.

ЙУЛТАЩĔСЕМ. Çиҗҗас туса паратпăр.

ÇЕМЕН. Мĕнле, вăйа кайса вăрласа парас тетре?

УПРАМ. Çук, Анук вăл вăйăсене çўремесĭ. Кунтах тăватпăр. Вçелиса йаратпăр та, җĕнтерсе килтеретпĕр, а хамăр вăл вăхăтра лаша кўлсе тăрататпăр. Как килет, так и в трантас... и... аҗҗо Çемен патне.

ЫТТИ ЙУЛТАШĔСЕМ. Вот сана хĕр те пулаĭ. Ха-ха!..

ÇЕМЕН. Епĕ те çаплах шутланăҫҫĕ.

УПРАМ (*Çывракан йăмăкне—Вçелиса таратат*)

Пыр. Кайса Анука ҫĕнсе киҫ. Упрам патĕнҫе сан. патна çыру пур те.

ВÇЕЛИС. Ай-йай! çĕрле ăçта кайас ман унта!..

УПРАМ. Ниҫево. Йатăсем çук. Кайса киҫ.

(*Вçелис; ай-йай! тесе тухса кайат*).

УПРАМ. Асту, илсех киҫ!

3-МĔШĔ. Ну туй тăватпăр. Çапла вĕт Çемен?

УПРАМ. Çапла пулмасăр. Как ĕç кăларатпăр, так и тайош çута Çемен виç ҫетвĕрт.

ÇЕМЕН. Ĕç тухсан, виçĕ ҫĕтвĕрт мар, пиҫкипе те лартса парăп. Манăн хаҫ пĕр туй мар, вăй 25 туй тумаллăх та пур.

2-МĔШĔ. Туйне пит ҫаплă тăвархa, Çемен. Ĕмĕрлĕхе асăнмалла пултăр. Епĕр те е-ех... Çемен, саншăнах 3-шер лаша кӳлсе тухăпăр. Çапла вĕт, йулташсем, а?

ЙУЛТАШĔСЕМ. Ну та!

ÇЕМЕН. Анҫах нумай каласса ларса ĕç тухмĕ, ĕçсе пĕтерер те ĕçе тытăнар. Ну-ка, йулашкине çавăрса хурăрха (*лешĕсем çавăрса хураççĕ*). Лешĕ килиҫҫен вĕт лаша кӳлсе йантламалла. (*Ĕçсе пĕтерсен, Упрам сĕтел çине пустарат*).

## IV-мĕш курăнни.

*Кӳршĕ çынни Лăриван пырса кĕрет.*

ЛĂРИВАН. Татах килмелле пулҫĕха. Упрам, шăллăм, Васлейсем каллах леçсе панă терĕç.

УПРАМ. Апла пулсан, Йакурсем патĕнҫе пуҙ, килте ҫукҫĕ (*кăларса йарасашăн*) унта кайса пăхха еппин.

ҪЕМЕН. Йакурпа арăмĕ пайан каҫалапа таҫтан килҫҫĕҫĕҫ, унтан вара ниҫта та кайман пулĕха. (*Йулташĕсемпе пăштăн сăмахлама тытăнат*).

ЛĂРИВАН. Тархатаратĕҫке ҫав урапи те, пайан шыраса кăн тухрĕ ёнтĕ (*ларат*). Арманне кайасси те пулмасти тен? (*Упрам тҫўретҫе витĕр Анук килес ѐ пăхат*).

ҪЕМЕН. Каймалласкерне кайах ёнтĕ. Хаҙ армансенҫе ҫын ҫукрах терĕҫ, тулса ларсан вара ҫерет кĕтсе выҫа вилме тивĕ (*каллах йулташĕсемпе калаҫма тытăнат*).

ЛĂРИВАН. Вилессине вилесех ҫук та, ҫерет кĕтмелле пулсан, кивҫен шырамаллах пулаť. Тарăхтараťҫке арманĕ те. ҫав, хăйамат!..

ПĔР ЙУЛТАШĔ (*каларса йарасшăн*). Урапа пирĕн пурҫҫĕ, пушах лараť, аттесем патне кайса ыйтса пăх, Лăриван пиҫҫе.

2-МĔШĔ. Е-ей!. Урапа тупмарĕ, кирлĕ пулсан хамăран та пур.

ЛĂРИВАН. Кĕҫĕр кайма те пулаťха... урапи пулĕ таха вăл шырасан, утассиха!.. (*Ҫемен тҫўретҫерен кайса пăхат, пурте тем хыпаланнă пек пулаҫҫĕ*).

УПРАМ. Урапа Йакурсем патĕнҫех пуҙ, Лăриван пиҫҫе. Кайса пăхсан, парса йарĕҫ.

ЛĂРИВАН. Те ыран кайас... ĕҫсе пĕтертĕртĕри мĕн есĕр. Ĕҫкĕ манăн та тумалла таха... таҫта арман авăртса салат тумаллаха, ĕҫ ҫине каиҫҫен туса илсен йураҫҫĕ те...

ÇЕМЕН. Ара, халиђђен ĕçес пулсан, тепĕр пилĕкĕшне те çавăрса хумалла та, кун ђулпа çитĕ терĕмĕр ĕнтĕ, Лăриван пиђђе.

ЙУЛТАШĔСЕМ. (*тайкаланса*). Кун ђул тайкаланмалăх пулнипе... ташлама та пулаť.

ЛĂРИВАН. Купăс тупса килес. Мĕн пăхатăр. Е-епĕр çамрак ђухне кăшт пуç патне пырсанах вара... хуçаттăмăр çеç ташша.

ÇЕМЕН. Апла та... халĕ пырĕ ĕнтĕ ахалех.

ЛĂРИВАН. Салтак йађĕ тухмасťиха сирĕн, Упрам шăллăм? Хађ вĕť пурне те илсе кайаççĕ. Пăтранса кайрĕ çак саманни ге... е-е-х!..

3-МĔШ ЙУЛТАШĔ. Хађ çамрăкрах пуђха.

УПРАМ. Çамрăкха хађ.

ЛĂРИВАН. Ăн-та... (*ђĕлĕмне ђĕртсе йараť те, татах халăпланма пуçлаť*). Çапла çав, тем тума вăрсаť çав патши те... ывăл таçта пурăнаť ĕнтĕ манăн, çыру килменни пĕрик ерне те çитрĕ.

2-МĔШ ЙУЛТАШĔ. Сывă пулсан, пурнаççĕ пулĕха.

(*Çемен каллах ђўретђе умне кайса пăхаť*).

ЛĂРИВАН. Кам пур вара çаплах пăхатăр?

УПРАМ. Хĕрсем вăйа кайнине пăхаť пуђ, йаш çын шухăшĕ ара вĕçетех çав!

ЛĂРИВАН. Н-та!.. Хусахсем пирĕн пек мар çав.

ЙУЛТАШĔСЕМ. Вăйа кайма вăхăт çитнĕ пуђ, ађасем. Каймалла марши?

ÇЕМЕН. Халиђђен пуçтарăнђĕç пуђ. Кайатпăр пуђ.

ЫТТИСЕМ. Кайас! кайас!.. (*тапранăна пекки пулаççĕ*)

ЛӐРИВАН. Кайӑрах еппин. Манӑн та кайас пуђ. Еппин епӗ, Упрам шӑллӑм, Йакурсем патне тепре ҫитсе пӑхамха (*тӑрат*).

УПРАМ. Ҫитсе пӑхах. Вӗсем парса йараҫҫех (*атђасем тухса киймах патне ҫитеҫҫӗ, антђах каймаҫҫӗ*).

ЛӐРИВАН. Йурӗха еппин. Ман ҫул сирӗнпе мар, кайасха, сирӗн хӑвӑрӑн ҫул ӗнтӗ (*кайат*).

## V-мӗш курӑнни.

ҪЕМЕН. Вот шуйттан, килсе ларса та тухса кайма та пӗлмест, ђип-ђипер ӗҫе хуҫат вӗт, шайттан!

ЙУЛТАШӖСЕМ. Ђӑнах.

УПРАМ. Урапа, урапа... вот урапа паратђӗ татах ларнӑ пулсан, латнӑ тухса кайрӗ.

ҪЕМЕН. Васкас пулат, йулташсем. Ҫавӑн пек тӑмсай каллах килсе кӗрсен, пӗтрӗ вара.

ЙУЛТАШӖСЕМ. Мӗн тумалла?—Тӑватпӑр. Тавай, тавай!..

ҪЕМЕН. Вот што: есӗр иксӗр (*тӗллесе кӑтартат*) халех тухса лаша кӳлме хатӗрленсе тӑрӑр, хӑмӑтсене, ӗнерђӗксене тупса йантлӑр, килнине курсанах кӳлсе лартӑр.

ЙУЛТАШӖСЕМ. Малалла...

ҪЕМЕН. Епӗр Упрампа ҫенӗке тухса. калла тухса кайассине сыхласа тӑратпӑр, епӗ малтан курӑнмастӑп, Упрамӑн курӑнсан та йурат.

ЙУЛТАШӖСЕМ. Е-ей!.. хӗр вӑрлатпӑр вӗт! Ха-ха-ха!.

ҪЕМЕН. Кулса мар, ҫерйоснӑ тытӑнас пулат, ытту хамӑр намӑс курма пултаратпӑр. (*Упрам тђӳретђе умне кайса пахат*).

УПРАМ. Килеççĕ! (*васкаса*) Йакурсем телĕнђен иртрĕç.

ÇЕМЕН. Ђăнахи? Тавай, тавай, васкăр, ађасем!.. (*пурте хыпаланаççĕ*). Есĕр иксĕр лаша кӳлме тухса кайăр! (*икĕ йулташĕ хыпаланса тухса кайаççĕ*).

УПРАМ. Ман кунтах йуласи, йе санпа пĕрлех çенĕке тухас?

ÇЕМЕН. Айта хађ! кайран кĕретĕн.

УПРАМ. Айта еппин... (*хыпаланса тухса кайаççĕ*).

## VI-мĕш курăнни.

(*Вçелиспа Анук кĕреççĕ*).

АНУК (*хуйхăллă, пуçĕ усăнтђăк*). Ăçта кайнă, никам та çукĕçке.

ВÇЕЛИС. Хађ килтеђђĕ, çыру пур тесе йађĕ.

АНУК. Камранне каламари?

ВÇЕЛИС. Каларĕ, Вађккаран терĕ.

АНУК (*савăнăçлă пек пулса*) Апла пулсан, кĕтсех ларас пуђха (*ларать*).

УПРАМ (*кĕрет*). Мĕнле ђупатăн, хĕрĕм?

АНУК. Хуллен ђупкалатăпха. Сан патăрта ман патна çыру пур терĕ те, ак сан патне килтĕм.

УПРАМ. Хе-хе-хе... Ну, есĕ те çав Анук ытараймастăн çав Вађккана. А çав Çемене ма тиркетĕнха?— Самăй первăй ађа вĕт вăл йалта.

АНУК. Первăй... Каларĕ первăй!.. Арăмсене улăштарас йенђен, тата ĕçес йенђен первăй çав. Путлĕ хĕр кам тухтăр ăна, усала.

## VII-мĕш курăнни.

(*Семен кĕрет, Анук вăл кĕрсенех хăранă пек пулса ларать*).

УПРАМ. Киҫах, Ҫемен. Малалла ирт. Сӑмах ҫинҫех ҫитрӗнӗҫке есӗ.

ҪЕМЕН, Ыр ҫын ывӑлӗн сӑмах ҫине ҫитни тини ӗнтӗ вӑл. Мӗн сӑмахларӑрха? Есӗ тата Анук ма ҫалӑш ларнӑ, еккей, есӗ те ҫав!.. (*патнелле пырса ларат*).

АНУК. Ҫырӑва парса йар еппин, Упрам. Килте ӗҫсем пурҫҫӗ тата.

ҪЕМЕН. Ан васкаха ӗнтӗ, хаҫ ҫӗрле мӗн ӗҫӗ пултӑр. Тантӑшсемпе пӗрле ҫухне сӑмахласа ларар халӗ.

УПРАМ. Партак ларахха ӗнтӗ, атту есӗ уйӑхӗпе те килсе курмастӑн ӗҫке пирӗн пата.

АНУК. Ҫук, ман каймаллах. Кунта ларса ӗҫ пулмӗ.

УПРАМ. Ҫиҫҫас парса йарам еппин (*ҫырӑва ҫыранӑ пекки пулат*).

ҪЕМЕН (*Анук ҫумнех пырса ларат*). Вӑйсене тухкалатниха, Анук?

АНУК. Сана мӗн ӗҫ, хӑй тухӑп, хӑй тухмӑп, сан ӗҫ ҫук унта.

ҪЕМЕН. Ек-кей, пит усалӑҫке есӗ, кӑмӑлна кам ҫисе кайнӑ вара санӑнне: кашкӑри, упаи? (*айккинҫен тӗккелеме пуҫлат*).

АНУК. Пошалстӑ ан ҫулӑх ман ҫумма, Ҫемен. Сан арӑмусем пур вӗт, кай вӗсем патне.

ҪЕМЕН. Хе-хе-хе!.. (*ыталама хӑтланат, Анук ура ҫине тӑрат*). Ан тар ӗнтӗ. Кашкӑр мар вӗт епӗ. Арӑм... арӑм... ӑҫтаха ман арӑм, хӑвна илсен пулаӗ акӑ вӑл.

АНУК. Но-о... сана пыриҫҫен кӗлӗмҫе кайам та, луҫшӑ пуранам.

ÇЕМЕН. Хе-хе-хе... кĕлĕмçе... а ман пулсан мĕн тăвăнха?

АНУК. Тĕлĕкре-и? итто ăшшă пулас çук.

ÇЕМЕН. Ха-ха-ха!.. кĕретĕнех пулатăн акă, аçусене çутти лартсан, ман çума шăмпăлт çеç кĕрсе выртатăн.

АНУК. Ах, усал! Вăтанасçĕ пăртак. (*Упрам йенелле çавранса*). Тупрăни ес?

УПРАМ. Çиççас. çиççас. Таçта хутсем айне пулнăха. (*Çемен шăхăрат. Анук тухса тарма тăрат, антъах Çеменне Упрам йарса тытаççĕ*).

## VIII-мĕш курăнни.

(*Йўрте йулташĕсем тъупса кĕреççĕ*).

АНУК (*çухăрат*). Вилменскерсем, мĕн тăватăр есĕр манпа, халех хурах кăшкăратăп. Ах, ах!—(*вĕçерĕнсе тарасшăн*).

ÇЕМЕН. Хурах кăшкăрма пусмастпăр вĕт епĕр сана. телейлĕ киç çурта, Çемен киççуртне—райлă пурнăçа илсе кайатпăр, ухмах.

АНУК. Пымастăп, пымастăп, кирлĕ мар мана Çеменĕп райĕ. Вĕлер, пымастăн. Ах, ах!.. (*туртăнат, йĕрсе йарат*).

ВÇЕЛИС (*хăраса кайат*). Ан макăртăр, ма макăртатăр.

ÇЕМЕН. Ниçево. Лаша хатĕри?

ЙУЛТАШĔСЕМ. Хатĕр.

АНУК. Ну, Упрам. Мĕн тунăха еп сана мана çавăн пек хур тума!

(*Анука сĕтĕрсех илсе тухса кайаççĕ, Анук турткаланса, йĕрсе тухса кайат*).

СТСЕНĂ ХЫÇЁНҪЕ. Айта, йарапар, е-е-ей!..

ÇЕМЕН САССИ. Çăварёнҫен тытăр, атту çынсем спксе тухĕç. (*Лăпланаççĕ, пĕр урапа сасси çеç илтĕнет, пăртак тăрсан вăл та çухалать*).

ВÇЕЛИС. (*тъўретъе витĕр пăхса*). Хурҫка тытса ка-айрĕ...

(*Ҫăршав*).

# IV-мĕш пайĕ.

## I-мĕш куранни.

*Çеменсен килĕ. Ђапла çурт. Анук пĕтђтђенех атђине тытса ларать. Ĕç тепĕр çултан, револютси пуçлансан, пулса иртет.*

АНУК. Ех, пурнăçи ку? Аштĕне хăваласа йађĕ, амашне хĕнесех вĕлерђĕ. Хăйĕн ĕçсе çӳрес марђђĕ прех хуť... ак пайан ир тухса кайса та, такам патĕнђе ĕçсе çӳрет ĕнтĕ. Ех, ывлă-ăм, сан çинђе çеç савăнăç. О-о-ох!.. (*атђине силет*) ывăл пулнă тата хăй (*тђуп туса илет*). Ах, аçуйех усалçке сан. Мĕн пĕлетĕнши есĕ? Пахаť тата хăй. О-о-ой!.. (*Каллах тђуп туса илет*). Аçу уса-ал. Мана кашни кун ӳсĕрпе килсе хĕнет вĕт (*атђине*). Çыврас килђĕи? Çыврах, çыврах. О-о-ой!.. (*тулта ура сасси илтĕнет*).

Килет пуђ ĕнтĕ путсĕрĕскер çĕмĕрсе. Ĕçес марђђĕ хăť сыспан. Пĕтĕм пурлăха салатаť ĕнтĕ ĕçсе, пасара кайма та укçа хăвармарĕ, мур илешшĕ!

## II-мĕш куранни.

ПОЂТАЛЙОН (*кĕрет*). Сывăи? Çемен ăçта кайнă?

АНУК. Сывăха. Çеменĕ пайан ир тухса кайнă та, халĕ те çукха, таçта ĕçсе çӳрет пуђ, урăх мĕн ĕç тата унăн.

ПОҪТАЛЙОН. Сирӗн пата ҫыру пурҫӗ, ҫавна кӗрсе парса хӑварас терӗм. Ме... (*Кӑларса парать*). Кам та пулсан ырӑ хыпар ҫырнӑ пуҫ.

АНУК (*ҫырӑва илсе*). Камранши ку? Никамах та ҫырмалла марӑҫке халӗ.

ПОҪТАЛЙОН. Кам та пулсан тупнах ӗнтӗ ҫырмалли, ахалех килмен вӑл кунта ҫитиҫҫен. Но, мач кайас, тата 5—6 ҫӗре ҫитмеллеха. Сыв пулӑрха! (*тухса кайать*).

АНУК. Ма лармарӑн? Татах кил еппин.

### III-мӗш курӑнни.

*Анук атҫине вырторса ҫырӑва сӳтсе вулать*).

„Анук! пайан епӗ есӗ каҫҫа кайса аҫа та ҫуратма ӗлкӗрнӗ тенӗ хыпар илтрӗм те, питӗ хытӑ хурлантӑм. Варҫӑра ҫапӑҫнӑ ҫух тем тӗрлӗ нушасем курнӑ пулин те, куҫҫуҫ тухса курманҫҫӗ. Халӗ... есӗ кайса аҫа ҫуратса панӑ тенине илтсен, тем тӗрлӗ асапра та ҫӑтнӑ тимӗр куҫсенҫен ирӗксӗрех куҫҫуҫсем йухса анҫӗҫ. (*вулама ҭарӑнса*). Ах, Ваҭкка-а! (*Хыттӑн кӑшкӑрса йӗрать*). Есӗҫке! (*Куҫӗсенҭен куҫҫуҭсем йухса анаҫҫӗ. Малалла вулать*). Астӑватни, Анук! епӗ сана илме пулнӑҫҫӗ, есӗ мана пыма хатӗрленсе тӑнӑҫҫӗ, ҫав путсӗр пйанҫук Ҫемен тыттарса йаман пулсан, епӗр иксӗмӗр пӗр мӑшӑр пулмалласкерсемҫҫӗ. Есӗ хӑвах Ҫемене курайmастӑнҫҫӗ. Мӗнле тухрӑн ӑна, санӑн сывӑ шухӑшусене кам ҫисе кайрӗ? (*вулама ҭарӑнса*). Ах, ӑҫташи ес, мӗскӗн? Пӗлетӗнши есӗ епӗ мӗнле кайнине, ҫухлатӑнши есӗ епӗ мӗнле хӗн-хур тӳссе пурӑннине (*куҫҫулӗсене шӑлса илет те, каллах малалла вулама пуҫлать*).

Малалла хам ҫинђен. Халĕ ҫын йунне тăкакан Микулай патшана вырăнтан сирпĕтрĕҫ. Фронтра революци. Салтаксем вăхăтлăха нумайăшĕ киле таврăнассĕ. Ҫак кунсенђе епĕ те киле тавранатăп. Ун ђухне, хамăн ĕлĕкхи тăшмансене, .хăт вăл сан упăшку пулсан та, тивĕҫлипе таварма пĕлĕп. Унђен сывă пул! Ваңкка.

(*Анук ҫыруне сĕтел ҫине хăй умне пăрахса йĕрсе ларат*). Илемлĕђђĕ вăхăтсем. Ҫу кунĕсем ытла та илемлĕђђĕ. Каҫхине вара ҫӳреттĕмĕр Ваңккапа. Уйăх та ун ђухне пирĕн ҫине ăш кăмăлпа пăхатђĕ, телейлĕ мăшăрсем тесе пилленĕнех туйăнатђĕ. Унтан... унтан... ҫу кунĕсем иртсе кайрĕҫ, телейлĕ кунсем иртсе телейсĕр кунсем пуҫланђĕҫ. Ним сисĕнмесĕр ҫу иртсе хĕл иртрĕ, каллах кĕркунне ҫитрĕ. Ман пурнăҫ та, ах!.. Ҫавнашкалах иртрĕ, савăнăҫлă пурнăҫ ытла та ђас иртсе ҫухалђĕ. Ҫук, ҫук, тавăрнас ҫук ĕнтĕ вăл вăхăт. Кашни кун патак... кунсем телейсĕр. (*Сĕтел ҫине пуҫне тайса тылайтђен йĕрсе ларат, унтан хĕр йĕрри кĕвеипе хурлăхлă йурă пуҫлат*):

Ах, аттеҫем, аннеҫем  
Сирĕн пирки еп пĕтрĕм:  
Есĕр паман пулсассăн  
Хаљ те епĕ сирн хĕрђĕ,—  
Пуйанлăха хапсăнса  
Пуйан ҫынпа килĕшрĕр—  
Ак хаљ ĕнтĕ ђăт та, тӳс  
Выљях ҫимен патак ҫи.

} 2-шерхут.

Пурнăҫи ку? Унђен ҫав!.. Ма ҫукши ман тĕллĕн вилĕм пĕрех хут, куҫăм нимĕн курмасђĕ. Ҫав аттетем килĕшнийех пĕтерђĕ. Вĕсем килĕшмăн пулсан, халĕ те

епĕ хĕрҫҫĕ, скорă Ваҕккан пулаттăм. Ҫапла сав ҫăваш йăли: сахал мар хĕр ĕмĕтне пĕтерет вăл. Мĕн пурши ĕнтĕ пĕр ҫĕркаҫнăшăн калла кăларса кайма хăрамалли! (*сехет ҫине пăхат*). Ҫур ҫĕр те иртнĕ. Ҫӳрет ҫав сысна сĕтĕрĕнсе. Акă автансем те аватаҫҫĕ, тул та ҫутăлаҭ, вăл ҫапах ҫук. Килсен те ырри пулас ҫук та... унҫҫен анҫах ҫав!..

## IV-мĕш курăнни.

ҪЕМЕН (*ӳсĕр кĕрет, тайкаланаҭ*). Карҫăк, ҫимелли мĕн пур?

АНУК. Мĕн пултăр, йашка йулашки пурҫҫĕ, ҫавна ăшăтса парас пуљ анҫах.

ҪЕМЕН (*хай·ррăн*). Йулашки! Мана йулашки мар, сана вăл йулашки. Тавай, ҫĕнĕреп пĕҫер!

АНУК. Ухмах, тул ҫутăлаҭ вĕҭ. Кам хаљ пĕҫерсе хăтланас. Выртас та ҫыврасҫĕ.

ҪЕМЕН. Каланă сана, итле. Мана хирĕҫ ҫăварна ан уҫ, тăмсай. Манпа пурăнма тивĕҫлĕ те мар есĕ, епĕ пуйан ҫын ывăлĕ, хам хуҫа, пĕтĕм йал ман куҫран пăхаҭ, есĕ... есĕ кĕлĕмҫĕ хĕрĕ.

АНУК. Ытла хытă ан кăшкăрха, аҫана вăратан.

ҪЕМЕН. Аҫана еп туман, ес тунă, сан вăл. Хăҫан та хăҫан хам ҫурататап—ҫ·вăн ҫух тин пулаҭ ман аҫа.

АНУК (*хуллентерех*). Ҫӳрет ҫав ҫапкаланса, йытă...

ҪЕМЕН. Мĕн терĕн ҫак ес. Йытă терĕни? Епĕ йытă мар, вот сана йытă (*тьыиса йараҭ*) а ку тата итлеменшĕн (*пуҫĕнтьен ҫапаҭ. Анук кукăра кайса тăрса йĕре пуҫлаҭ*).

ÇЕМЕН. Йĕрсе хăратаймăн. Тух та кай ман патран, сан пеккисене епĕ пĕрре мар, 50 тупса килме пулта ратăп. Марш, аҫуна та илсе кай.

АНУК. Йурат, 50 мар, 100 туп. Анҫах есĕ çын мар, сысна! Хĕрарăм мурĕ!

ÇЕМЕН. Епĕ сыснаи? (*Анука тыша кăларса йарат. Анук атҫане илсе йĕрсе тухса кайат*).

ÇЕМЕН. Ха-ха-ха! Пăçланман карҫăкĕ. Çапкаланса çӳретĕрха тĕнҫе тăрăх. Но натă чайма. Е-е-ей!.. Хусах... Арăм çук... Урама хĕрсем патне кайас натă, кам та пулсан йуратса кайĕ те, акă вара пурнăç! Тарлит, тăрлит ник-нок (*ташлакалама хăтланат, кайран тухса кайат*).

## V-мĕш курăнни.

АНУК (*атҫине йăтса кĕрет*). Есĕ те телейсĕр çуралнă аҫам, хаҫхи кунсем саншăн та телейсĕр. Есĕ те ман пекех телейсĕр. Акă, тул та çутăлҫĕ (*тулта автансем авăтни илтĕнет*), çĕр çывăрмасăр нуша тӳсен. Ех, пурнă-ăç!.. (*атҫине*) О-о-ой!.. тем пек усрăттăм сана, ҫунăм. Анҫах. анҫах... хамăн та таçта çитсе вилмелле. О-о-ой!.. выртах çакăнта, аçу килиҫҫен ла-айăх çывăр, ĕпĕ ĕнтĕ çаплах сана пăхакан аннӳ пулаймастăп (*тып туса илсе хытă йĕрсе йарат те, тухса кайма тăрат, анҫах кайаймаст, çаврăнса пăхса тăрат, тăрат те, каллах ныреа тып тăват*). Мĕн тĕвас-ха манăн, епĕ мар айăплă ывлăм, епĕ мар, аçу çавнашкал пулҫĕ. Тул та çутăлса кайрĕ, (*тӳретҫе витĕр пăхса*). Е-х, хĕвел те мĕнле илемлĕн çутăлса тухат, автансем те илемлĕ авăтаççĕ (*автансем авăтни илтĕнет*). Ах...

пурте илемлĕ... ах!.. илемлĕ тĕнҫерен... ах!.. уйăрлас... уйăрлас пулаĭ. Ăҫта ҫитсе... ăҫта вилмеллеши? Аттесем... калла илес ҫук. Ма телейсĕр ҫуратнăши хăĭ мана! А-а-х!.. Сыв пул, ывлăм. Епĕ... епĕ леш тĕнҫене кайатăп. Ах!.. (*Питне аллисемпе хупласа илет, тутăрĕ ҫамки ҫине усăнса анкă*). Ах!.. Ҫыврах, ывлăм, ҫывăр (*йĕрсе тухса кайма тăрăт, атҫи те макăраĭ*).

## VI-мĕш курăнни.

(*Салтакла тумланнă Ваҥкка кĕрет*).

ВАҥККА. Сывăи? Мĕнле ҫупкалатăр?

(*Анук хăраса кайат, нимĕн те тҫĕнмест*).

ВАҥККА. Анук, иртсе килнĕ ҫух ҫўреҫе витĕр сан сăнна куртăм та, киле ҫитиҫҫенех кĕрсе курас терĕм. Есĕ мана палламастни мĕн? (*Анук тҫĕнмест*). Епĕ сан ĕлĕк пулнă тусу Ваҥкка пулатăп.

АНУК. Ваҥкка!.. Ваҥкка!.. (*Хытă йĕрсе йарат. Ҫупса пырса Ваҥккана ытăласа илет*).

ВАҤККА. Ма йĕретĕн, Анук?

АНУК. Каҫар мана, Ваҥкка, каҫар! Еп... епĕ... хам ирĕкпе мар... мана вăйпа илсе кайнă. Халĕ... халĕ... хăваласа йаҫĕ. Ваҥкка!.. Ваҥкка!.. кĕтменҫҫĕ сана. Сана... сана... курмасăрах вилес тесе шутланă.

ВАҥККА. Ҫимха, ытла куҫҫуҫ ан тăк, Анук. Хăваласа йанă пулсан, мĕнле кунтах пурăнан есĕ?

АНУК. Епĕ... епĕ... аҫана.. ах!.. аҫана... аҫана... пă... пăрахса хăварма ҫеҫ килнĕ.

ВАҥККА. Ну-у! (*Анук ҫине пуҫне тайса тҫылăйтҫтҫен тăнă хыҫҫăн*). Анук ытла ан йĕр, епĕ сан хута

кĕрĕп, каçарăп сана. Анђах... анђах... Çемене каçару пулас çук, нихçан та. Халиђђен пирĕншĕн телейсĕр кунсем пулнă, анђах халĕ... халĕ револђутси. Пуйансене халĕ пур çĕрте те леш тенђене ăсатаççĕ. Епĕ те çав шутпах килнĕ. Пуйансене мăшкăлама халĕ ĕнтĕ текех ирĕк пулмĕ. Епĕ манман, мана кайса вилтĕр терĕç пуђ. Епĕ ђĕрĕ, ман ђĕре те халĕ çирĕп. Ан йĕр, Анук! Епе сана арăм пулнăшăн тиркемĕп, уншăн есĕ мар, Çемен айăплă, веçех вăл тўсĕ! Ан йĕр! Пуйан йави ырансенех ишĕлĕ, ырансенех йалта пирĕн пек ђухăнсен влаçĕ пуçланĕ, телейсĕр кунсем иртĕç, ырансенех телейлĕ кунсем пуçланĕç. Çемен сана хăваласа йани, вăл санран мăшкалани кăна мар, манран та кулни пулаĭ. Анђах кулаймĕ, унăн шалђи!.. шалђи тулаĭ.

## VII-мĕш курăнни.

(*Çемен кĕрет*).

ÇЕМЕН (*Ваңкка çинелле куçне тăвăрса уçса пăх те*). Ку кам? Ха-а!.. Милитси! Ман арăм патне улаха килнĕ. Стой!.. Лекрĕр (*сĕтел çинтђе выртакан çĕççе йарса илет те, Ваңккана кăкринтђен йарса тытаĭ*).

ВАңККА. Епĕ милитси мар, епĕ Ваңкка (*револђвĕр кăларса тĕллет. Çемен хăранипе çĕççине пăрахса йарат*). Ман сана, Çемен, парăм пур. Епĕ çавна парса татма килтĕм.

ÇЕМЕН. Хам килте... хам килте санран хăраса ларас-и? Иксĕре те вĕлеретĕп (*Анука хĕнеме йарса тытма тăрат, антђах Ваңкка тђарат*).

АНУК. Есĕ çĕрĕк çын. Епĕ текех санăн мар.

ÇЕМЕН (*тарăхса, хыттăн*). Ă-ăх! Епĕ çĕрĕки-и? (*Анука каллах хĕнеме тытма тăрат, антђах Вађккаран хăрат*).

ВАђККА. Ан тĕкĕн, путсĕр çын. Есĕ çынна тĕкĕнме пултараймастăн. Анук халĕ санăн мар, манăн. Халĕ санăн манран парăм илесси çеç йулђĕ. Астăватна, Çемен. Есĕ мана вилтĕр тесех тыттарса йатăн. Çитменни çине ман хĕртен мăшкăларăн. Çавăншăн... çавăншăн... ђухăнсенђен мăшкăлакан пуйансене вĕлернĕшĕн халĕ çылăх та, сут та çук. Акă, ил парăмна (*персе пăрахат, Анук пăшал сассине хăраса ай! тесе кăшкăрса йарат*).

(*Ђ а р ш а в*).

ХАКЕ 30 ПУС.